27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 27 ЫТЛАРИКУН 38(6789) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

СССР СОВНАРКОМĔНЧЕ

Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене акса тăвас ĕҫе лайăхлатасси ҫинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫакна палăртать: 1937 ҫулта тунă вăрлăх хуҫалăхĕсен системи (селекци станцийĕсем, райсемхозсем, колхозсемпе совхозсенчи вăрлăх участокĕсем, Госсортфонд, Госстрахфонд, вăрлăх сорчĕсене тĕреслемелли пунктсем) хăйне тӳрре кăларчĕ. Ҫав системăпа усă курса, тĕштырă культурисен сортлă вăрлăхĕсене акса тăвас ĕҫе лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕҫсем туса ирттернĕ. 1937 ҫулта колхозсенче сортлă вăрлăхсем акнă ҫĕр лаптăкĕ 42 процент пулнă пулсан, ҫав ҫĕр лаптăкĕ 1940 ҫулта 84 процента ҫити ӳснĕ. Селекци станцийĕсем, тĕштырă культурисен пысăк тухăҫлă, ҫĕнĕ сорчĕсене туса кăларнипе пĕрлех, ҫулсерен суйласа илнĕ чи лайăх вăрлăхсем 1,5 миллион пăта ҫити туса кăлараҫҫĕ. Районсенчи икĕ пине яхăн шутланакан вăрлăх хуҫалăхĕсем колхозсемпе совхозсенчи вăрлăх участокĕсем валли ҫулсерен 15 миллион пăт ытла сортлă вăрлăхсем ӳстерсе ҫитĕнтерсе, Госсортфонда параҫҫĕ.

Кунпа пĕрлех СССР Совнаркомĕ ҫакна та палăртать: чылай облаҫсемпе крайсенче юлашки ҫулсенче сортлă вăрлăхсем акассине чакарса янă, вырăнти ҫĕрĕҫпе совет органĕсем ҫакă питех те паха ĕҫ ҫине сӳрĕк пăхма пуҫланă. Нумай колхозсемпе совхозсенче сортлă вăрлăхсем акса тăвас ĕҫе кирлĕ вырăна лартман. Вăрлăх участокĕсенчи ҫĕре сухаласа ҫемҫетес тата сортлă тырпулсене пăхса ҫитĕнтерес ĕҫре малта тăракан агротехникăна пурнăҫа кĕртсе пымаҫҫĕ, вăрлăх участокĕсем ҫинчи тырпула пухса кĕртсе сапнă чухне часчасах ытти тырпулсемпе хутăштарса яраҫҫĕ. Вăрлăх участокĕсем ҫинчен пухса илнĕ вăрлăхсемпе усă курмалли йĕркене, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ ҫирĕплетнĕскерне, пăсаҫҫĕ.

СССР Совнаркомĕ уйрăмах совет селекцийĕ туса кăларнă тĕштырăсен ҫĕнĕ паха сорчĕсене питех те вăрахăн сарса пынине палăртать.

Селекци станцийĕсем ăслăлăх тĕлĕшпе тунă ҫитĕнӳсем ҫинчен тата сортлă вăрлăхсен участокĕсенче тунă опытсем ҫинчен юлашки ҫулсенче пичетре пĕлтермеҫҫĕ тата вĕсемпе колхозсене, совхозсене, агрономи общественноҫне паллаштармаҫҫĕ.

Нимĕҫсем оккупациленĕ районсенче сортлă вăрлăхсем акса тăвас ĕҫе уйрăмах пăсса пĕтернĕ. Ҫав районсенче вăрлăх хуҫалăхĕсене (селекци станцийĕсене, райсемхозсене, сортсем тĕрĕслекен участоксене) аркатса пĕтернĕ, сортлă вăрлăх ĕҫне пăтраштарса янă.

Колхозсемпе совхозсенче ялхуҫалăх культурисен тухăҫлăхне ӳстермелли чи паха май пулса тăракан ĕҫе—сортлă вăрлăхсем акса тăвас ĕҫе юсаса йĕркелес тата пур майсемпе те сарас шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫапла йышăннă:

1. СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Апат-ҫимĕҫ промышленность Халăх Комиссариатне, крайисполкомсемпе облисполкомсене 1945 тата 1946 ҫулсем хушшинче сортлă вăрлăхсем акса тăвас ĕҫе вăрçăччен виҫене ҫитерме хушас, ҫав шутпа, пуриччен малтан селекци станцийĕсене, сортсем тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕҫлекен участоксене тата районсенчи сортлă вăрлăх хуҫалăхĕсене юсаса ура ҫине тăратмалла.

2. Колхозсемпе совхозсенче 1945 ҫулта сортлă тĕштырă культурисем акмалли плана республикăсемпе крайсем тата облаҫсем тăрăх ҫакăн чухлĕ ҫирĕплетес (колхозсемпе совхозсенчи пĕтĕм тырпулă акнă ҫĕр лаптăкĕнчен процентпа шутласа):

Алтай крайĕ	65
Архангельск облаҫĕ	65
Астрахань облаҫĕ	55
Башкир АССР-ĕ	80
Брянск облаҫĕ	50
Бурят-Монгол АССР-ĕ	55
Великие Луки облаҫĕ	50
Вологда облаҫĕ	65
Владимир облаҫĕ	80
Воронеж облаҫĕ	70
Горький облаҫĕ	80
Грозный облаҫĕ	65
Дагестан АССР-ĕ	65
Иваново облаҫĕ	80
Иркутск облаҫĕ	55
Кабарда АССР-ĕ	50
Калинин облаҫĕ	75
Калуга облаҫĕ	45
Кемерово облаҫĕ	70
Киров облаҫĕ	80
Коми АССР-ĕ	45
Кострома облаҫĕ	75
Краснодар крайĕ	75
Красноярск крайĕ	75
Крым АССР-ĕ	60
Куйбышев облаҫĕ	70
Курган облаҫĕ	75
Курск облаҫĕ	50
Ленинград облаҫĕ	65
Мари АССР-ĕ	50
Молотов облаҫĕ	75
Мордва АССР-ĕ	70
Мускав облаҫĕ	70
Новгород облаҫĕ	60
Новосибирск облаҫĕ	70
Омск облаҫĕ	60
Орел облаҫĕ	60
Пенза облаҫĕ	70
Псков облаҫĕ	40
Приморье крайĕ	60
Ростов облаҫĕ	75
Рязань облаҫĕ	70
Саратов облаҫĕ	75
Свердловск облаҫĕ	85
Ҫурҫĕр Осетин АССР-ĕ	70
Смоленск облаҫĕ	55
Ставрополь крайĕ	75
Сталинград облаҫĕ	70
Тамбов облаҫĕ	75
Тутар АССР-ĕ	75
Томск облаҫĕ	60
Тула облаҫĕ	50
Тюмень облаҫĕ	50
Удмурт АССР-ĕ	75
Ульяновск облаҫĕ	65
Хабаровск крайĕ	70
Челябинск облаҫĕ	65
Чита облаҫĕ	60
Чкалов облаҫĕ	82
Чăваш АССР-ĕ	80
Якут АССР-ĕ	45
Ярославль облаҫĕ	80
Азербайджан ССР-ĕ	83
Армян ССР-ĕ	75
Белорусс ССР-ĕ	55
Грузин ССР-ĕ	95
Казах ССР-ĕ	60
Карел Финн ССР-ĕ	25
Киргиз ССР-ĕ	55
Молдаван ССР-ĕ	50
Таджик ССР-ĕ	95
Туркмен ССР-ĕ	85
Узбек ССР-ĕ	55
Украина ССР-ĕ	65

3. Сортлă вăрлăхсем акса тăвас ĕҫе хăвăртрах йĕркелесе ярас тата сортлă вăрлăхсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕҫлекен пунктсене ҫав сортлă вăрлăхсене улăштарса илекен колхозсем патне май килнĕ таран ытларах ҫывхартас шутпа, ҫапла тăвас: пуриччен ытларах тĕштырă акса тăвас тĕлĕшпе ĕҫлекен кашни администрациллĕ районăн хăйĕн вăрлăх хуҫалăхĕ пулмалла, ҫав вăрлăх хуҫалăхне тăпрапа ҫутҫанталăк условийĕсем пĕтĕм районшăн пĕр пекрех тăракан вырăнта тата ҫав вăрлăх хуҫалăхĕ ҫумне ҫирĕплетнĕ колхозсен центрĕнче организацилемелле.

Тăпрапа ҫутҫанталăк условийĕсем пĕр пек мар уйрăм районсенче сортлă вăрлăхсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕҫлекен икĕ хуҫалăх организацилеме юрать, пысăк мар районсенче вара, вĕсен тăпрапа ҫутҫанталăк условийĕсем пĕр пек пулсан, икĕ район валли сортлă вăрлăхсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕҫлекен пĕр хуҫалăх организацилеме юрать.

СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне, республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене 1945 ҫулта сортлă вăрлăхсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕҫлекен районри хуҫалăхсене ҫĕнĕрен 921 хуҫалăх организацилеме хушас, вĕсене республикăсемпе крайсем тата облаҫсем тăрăх ҫакăн пек вырнаҫтарса тухас:

Алтай крайĕнче	10 хуҫалăх
Архангельск облаҫĕнче	7
Астрахань облаҫĕнче	4
Башкир АССР-ĕнче	10
Брянск облаҫĕнче	7
Бурят Монгол АССР-ĕнче	2
Вологда облаҫĕнче	2
Владимир облаҫĕнче	1
Воронеж облаҫĕнче	20
Горький облаҫĕнче	5
Грозный облаҫĕнче	7
Дагестан АССР-ĕнче	10
Иваново облаҫĕнче	4
Иркутск облаҫĕнче	2
Кабарда АССР-ĕнче	5
Калинин облаҫĕнче	4
Калуга облаҫĕнче	8
Кемерово облаҫĕнче	2
Киров облаҫĕнче	7
Коми АССР-ĕнче	4
Кострома облаҫĕнче	2
Красноярск крайĕнче	10
Крым АССР-ĕнче	10
Куйбышев облаҫĕнче	7
Курск облаҫĕнче	20
Ленинград облаҫĕнче	15
Мари АССР-ĕнче	8
Молотов облаҫĕнче	4
Мордва АССР-ĕнче	16
Мускав облаҫĕнче	20
Новгород облаҫĕнче	10
Омск облаҫĕнче	5
Орел облаҫĕнче	10
Пенза облаҫĕнче	5
Псков облаҫĕнче	20
Приморье крайĕнче	10
Рязань облаҫĕнче	10
Саратов облаҫĕнче	20
Свердловск облаҫĕнче	5
Ҫурҫĕр Осетин АССР-ĕнче	2
Ставрополь крайĕнче	20
Сталинград облаҫĕнче	10
Тутар АССР-ĕнче	17
Томск облаҫĕнче	3
Тула облаҫĕнче	4
Тюмень облаҫĕнче	5
Ульяновск облаҫĕнче	11
Хабаровск крайĕнче	8
Челябинск облаҫĕнче	3
Чита облаҫĕнче	10
Чкалов облаҫĕнче	10
Чăваш АССР-ĕнче	10
Якут АССР-ĕнче	5
Ярославль облаҫĕнче	3
Азербайджан ССР-ĕнче	15
Армян ССР-ĕнче	10
Белорусс ССР-ĕнче	75
Грузин ССР-ĕнче	15
Казах ССР-ĕнче	41
Карел-Финн ССР-ĕнче	2
Киргиз ССР-ĕнче	27
Таджик ССР-ĕнче	20
Туркмен ССР-ĕнче	10
Узбек ССР-ĕнче	60
Украина ССР-ĕнче	200

Республикăсен Совнаркомĕсене, крайсемпе облаҫсен исполкомĕсене икĕ уйăхлăх срокра, чи лайăх колхозсемпе совхозсене ҫакăнта кăтартнă чухлĕ суйласа илсе, вĕсене райсемхозсем туса ҫирĕплетме СССР Наркомземне тăратма хушас.

4. Райсемхозсем тунă совхозсен хисепне 175 хуҫалăх чухлĕ ҫирĕплетес, вĕсенчен СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ тăрăх—52 хуҫалăх, РСФСР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ тăрăх — 39, УССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ тăрăх—47, БССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ тăрăх—3, Казах ССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ тăрăх—3, СССР Апат-ҫимĕҫ промышленность Халăх Комиссариачĕ тăрăх—31 хуҫалăх ҫирĕплетес.

5. Республикăсен Совнаркомĕсене, облисполкомсемпе крайисполкомсене, СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне 1945—46 ҫулсенче ҫĕнĕрен организацилекен райсемхозсенче ҫĕрйĕркелӳ ĕҫне туса ирттерме тата вĕсенче тĕрĕс пусуҫаврăнăшсем тума, ҫав пусуҫаврăнăшĕсенче курăксем акмалла тата хура ҫĕртме сухаламалла тума. Ҫавăн пекех пусуҫаврăнăшĕсене пăснă райсемхозсенче пусуҫаврăнăшĕсене ҫĕнĕрен туса йĕркелеме хушас. Малашне райсемхозсене тырă акмалли ҫĕр лаптăкĕсем тĕлĕшпе паракан заданисене йышăннă пусуҫаврăнăшĕсене тĕрĕс шута илсе памалла. СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕн райсемхозсене 1945 ҫулта акма кирлĕ таран курăк вăрлăхĕсем сутмалла.

6. Ҫапла йĕрке тăвас: кашни райсемхоз тăрăх сортлă вăрлăхсем мĕн чухлĕ туса илмелли плана, ҫавăн пекех колхозсемпе совхозсенче тырпулсен сорчĕсене ҫĕнетмелли плана та райисполкомсен ҫулсерен пăхса тухмалла; ҫав ĕҫе районри ҫĕрĕҫ пайĕн главнăй агрономне, сортлă вăрлăхсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕҫлекен агронома райсемхозсен тата сортлă вăрлăхсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕҫлекен участоксен агрономĕсене обязательнăй йĕркепе хутшăнтармалла; пăхса тухнă плансене ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр облисполкомсемпе республикăсен Совнаркомĕсене тăратмалла; сортлă вăрлăхсем акса тумалли тата сортсене ҫĕнетмелли районсем тăрăх тунă плансене тивĕҫлĕ республикăсен Совнаркомĕсем, крайисполкомсемпе облисполкомсем пăхса тухмалла; ҫав ĕҫе селекци станцийĕсен тата совхозсен трестсĕсен директорĕсене, тĕштырă культурисен сорчĕсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕҫлекен государство комиссийĕсен инспекторĕсене, Госсортфонд конторисен управляющийĕсене, облаҫри тĕп агрономсене обязательнăй йĕркепе явăҫтармалла; районсем тăрăх тунă ҫав плансене вара декабрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне ҫирĕплетме тăратмалла.

7. Республикăсен Совнаркомĕсене, крайсемпе облаҫсен исполкомĕсене, СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Апат-ҫимĕҫ промышленность Халăх Комиссариатне 1945 ҫулта райсемхозсенчи, колхозсемпе совхозсен вăрлăх участокĕсенчи сортлă вăрлăхсем акнă тĕштырă культурисене, Госсортфондран илнĕ сортлă вăрлăхсене акса тунă пĕтĕм тырпулсене, паха сортлă вăрлăхсем акнă мĕнпур тырпулсене тĕрĕслесе тухма, ҫавăн пекех тата колхозсемпе совхозсенчи ахаль йышши тырпулсем акнă ҫĕр лаптăкĕсене те тĕрĕслесе тухма, пурĕ вара Госстрахфондпа Госсортфонда сортлă вăрлăхсем хывмалли ҫирĕплетнĕ плана пурнăҫа кĕртме май паракан ҫĕр лаптăкĕ ҫинчи—пĕтĕмĕшпе 28,1 миллион гектар ҫинчи тырпулсене тĕрĕслесе тухма хушас.

Ҫавăн пек тĕрĕслесе тухнă хыҫҫăн вăрлăх участокĕ ҫинчи тырпул вăрлăх тума юрăхсăрри курăнсан, вăрлăх акса тăвакан хуҫалăх, вăрлăхсене тĕрĕслекен ҫынпа пĕрле, вăрлăх валли лайăхрах пулма пултаракан тата тухăҫлăрах пулакан ахаль йышши тырпулсен шутĕнчен вăрлăх участокĕпе пĕр виҫеллĕ участок уйăрса илме пултарать.

Вăрлăх участокне ҫавăн пек улăштарассине урăхла нимĕнле тума та май ҫук чухне тата райисполком ҫирĕплетсен кăна туса ирттерме юрать, ҫак ĕҫе ăна тивĕҫлĕ культурăсене вырса пуҫтарма тытăниччен 10 кун малтан пурнăҫа кĕртмелле.

8. Колхозсенче вăрлăх участокĕсем уйăрмалли халиччен пулнă йĕркепе виҫене ҫаплипех хăварас.

Ҫурхи тулă акса тăвас ĕҫе хăвăртрах йĕркелесе ярас шутпа, 1945 ҫулта Иркутск, Кемерево, Куйбышев, Курган, Новосибирск, Омск, Пенза, Саратов, Тамбов, Томск, Тюмень, Ульяновск, Челябинск, Чкалов, Чита облаҫĕсенчи, Алтай, Красноярск, Хабаровск крайĕсенчи, Башкир, Тутар АССР-ĕсенчи, Казах ССР-ĕнчи колхозсенче ҫурхи тулă акакан пĕтĕм ҫĕр лаптăкĕнчен вăрлăхлăх ҫурхи тулă акмалли участоксене 20 процент чухлĕ уйăрса илмелле тăвас.

Нимĕҫ оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенче 1945 ҫулта пĕтĕмĕшлĕ ҫĕр лаптăкĕнчен вăрлăх участокĕсем ҫакăн чухлĕ уйăрса илмелле тăвас (процентпа шутласа):

Облаҫсем	Кĕрхи тырăсем	Ҫурхи тулă	Сĕлĕ	Урпа
Белорусс ССР-ĕ	19	20	20	20
Брянск облаҫĕ	18	19	20	18
Великие Луки облаҫĕ	17	18	17	18
Воронеж облаҫĕ	20	20	18	18
Карел-Финн ССР-ĕ	17	20	20	20
Калинин облаҫĕ	15	18	17	16
Краснодар крайĕ	18	19	16	15
Курск облаҫĕ	20	20	18	18
Крым АССР-ĕ	18	18	16	16
Ленинград облаҫĕ	18	19	20	19
Новгород облаҫĕ	18	19	20	19
Орел облаҫĕ	20	20	20	19
Псков облаҫĕ	19	20	20	20
Ростов облаҫĕ	16	20	16	15
Смоленск облаҫĕ	19	20	18	19
Ставрополь крайĕ	17	18	17	15
Сталинград облаҫĕ	20	20	17	16
Украина ССР-ĕ	19	20	16	16

9. Вăрлăх участокĕсем ҫинче мĕнпур уйхир ĕҫĕсене пахалăхлăн, агротехника кăтартнă чи лайăх сроксенче туса ирттермелле. Вăрлăх участокĕсене районра йышăннă сортсен суйласа илнĕ вăрлăхĕсемпе акса хăвармалла. Тырпулсене ҫумкурăкĕсенчен обязательнăй йĕркепе тасатмалла. Вăрлăх участокĕсем ҫинчи тырпула ытти тырпулсенчен уйрăмăн пухса кĕртмелле. Вăрлăх участокĕсем ҫинчи тырпула сапнă хыҫҫăн ҫийĕнчех сортласа тасатмалла, виҫсе хумалла, актсем ҫырса йĕркелемелле, ятарласа уйăрнă амбарсене хурса усрамалла, ытти сортсемпе ниепле те пăтраштарса ямалла мар.

10. СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Апат-ҫимĕҫ промышленность Халăх Комиссариатне тата Архангельск, Вологда, Ленинград, Киров, Свердловск, Горький, Калинин, Иваново, Ярославль, Смоленск, Омск, Новосибирск, Кемерово, Курган, Челябинск, Молотов, Иркутск, Псков, Томск, Тюмень облаҫĕсен исполкомĕсене, Красноярск, Алтай, Хабаровск, Приморье крайĕсен исполкомĕсене, Коми, Бурят-Монгол, Мари, Удмурт, Якут, Чăваш, Тутар, Мордва, Башкир АССР-ĕсен Совнаркомĕсене, Карел-Финн, Белорусс, Казах ССР-ĕсен Совнаркомĕсене (Хĕвелтухăҫ Казахстан, Кустанай, Ҫурҫĕр Казахстан, Павлодар облаҫĕсен исполкомĕсене), асăннă облаҫсемпе крайсенче тата республикăсенче кĕрхи тырăсене ялан тенĕ пекех иртнĕ ҫулта туса илнĕ тырпулсен вăрлăхĕсемпе акса хăвармалла тăвас тесе, 1945—1946 ҫулсем хушшинче колхозсемпе совхозсенче кĕрхи тырă культурисен тепĕр ҫула куҫакан вăрлăх фончĕсене пухса хывса хăварма хушас.

Кĕрхи тырă культурисен килес ҫула куҫакан вăрлăх фончĕсене сортлă вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпултан, ҫав вăрлăх участокĕсем ҫинче туса илнĕ тырпул ҫитеймесĕр пулсан вара, сортлă вăрлăхсем акнă пĕтĕмĕшлĕ ҫĕр лаптăкĕнчен пухса илнĕ тырпултан, колхозсемпе совхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене парса татнă хыҫҫăн, хывса хăвармалла.

11. СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕпе СССР Апат-ҫимĕҫ промышленность Халăх Комиссариатне 1945 ҫулта государствăн селекци станцийĕсенче тата суйласа илнĕ чи лайăх вăрлăхсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕҫлекен хуҫалăхсенче суйласа илнĕ чи лайăх вăрлăхсем (элита вăрлăхĕсем) туса илессин хисепне 200.000 центнера ҫитерме хушас, вĕсенчен СССР Наркомземĕн селекци станцийĕсенче 188.000 центнер, СССР Наркомпищепромĕн селекци станцийĕсенче 12.000 центнер туса илмелле.

12. 1945 ҫулта государствăн кашни селекци станцийĕнче суперэлита вăрлăхĕсен (суйласа илнĕ чи лайăх вăрлăхсен) страховой фондне ҫулталăкра кирлĕ вăрлăхсен пĕтĕм виҫинчен 30 процент чухлĕ хывса хăварма, ҫулталăкра кирлĕ суперэлита вăрлăхĕсен пĕтĕм хисепĕнчен страховой фондăн хисепне 1946 ҫулта вара 50 процента ҫитерме СССР Наркомземне ирĕк парас.

13. Республикăсен Совнаркомĕсене, ĕҫҫынни депутачĕсен крайсемпе облаҫсенчи Совечĕсен исполкомĕсене, СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне нимĕҫ оккупацийĕнче пулнă районсенче государствăн селекци станцийĕсен тата сортлă вăрлăхсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕҫлекен участоксен ĕҫне юсаса йĕркелесе яма хушас.

14. Тĕштырă культурисен чи лайăх сорчĕсене хăвăртрах сарас тата райсемхозсен —

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 24-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем ЗЕМЛАНД ҫурутравĕнче, КЕНИГСБЕРГ хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре, тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă. Ҫакăнпа пĕр вăхăтрах КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем тăшманăн Хĕвелтухăҫ Пруссири группировкине пĕтерсе тăкассăн ҫапăҫнă. ЭККЕР, КУКЕНЕН, ЛАНГЕНДОРФ, КВИШЕН, ПЕРБАНДЕН, ШЕНЕБЕРГ, РАУШБАХ, АНТИКЕН, ШВИЛЛГАРБЕН ялĕсене туртса илнĕ.

ДАНЦИГ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем малалла тапăнса пынă. ЖЕРОНЖНО, МАКСХАУЗЕН, ВЕЛЬБРАНДОВО, ОССОВО, ЗАМОСЦ, КЛОДНЯ, ГРОСС-ИЕНЦНИК, МОССИН, ШТАЙНБОРН, ШТРЕТЦИН ялĕсене туртса илнĕ. ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулинче хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкассăн ҫапăҫнă.

БРЕСЛАУ районĕнче пирĕн ҫарсем хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассăн ҫапăҫнă, БРЕСЛАУ хулине хупăрлесе ларнă ОЛЬТАШИН ялне туртса илнĕ тата хулан кăнтăр пайĕнче 15 квартал йышăннă.

ДУНАЙ шывĕн ҫурҫĕр хĕрринче, КОМАРНО хулинчен хĕвелтухăҫнерехре, пирĕн ҫарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса ҫӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн ҫапăҫнă.

Февралĕн 23-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 116 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 84 самолетне персе ӳкернĕ.

ФЕВРАЛĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 25-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем ЗЕМЛАНД ҫурутравĕнче, КЕНИГСБЕРГ хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре, тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, нимĕҫсене ҫынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк ҫухату кӳнĕ. Ҫакăнпа пĕр вăхăтрах КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре тăшманăн Хĕвелтухăҫ Пруссири группировкине пĕтерсе тăкассăн ҫапăҫнă, АМАЛИЕНВАЛЬДЕ, ПЛЕССЕН, ВОЙДИТТЕН, ТИФЕНЗЕЕ, МЮНГЕН, ГРОСС ХАССЕЛЬБЕРГ ялĕсене туртса илнĕ. Февралĕн 24-мĕшĕнче пулса иртнĕ ҫапăҫусенче КЕНИГСБЕРГ хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре нимĕҫсен 36 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă.

ХОЙНИЦЕ (КОНИТЦ) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем малалла тапăнса пынă, Померанире ПРОЙС ФРИДЛАНД хулине туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата ДАМНИЦ, КЛАУСФЕЛЬДЕ, БИШОФСВАЛЬДЕ, БАРКЕНФЕЛЬДЕ, ХАЙНРИХСВАЛЬДЕ, ПЕТЕРСВАЛЬДЕ, ПРЮТЦЕНВАЛЬДЕ ялĕсене ҫапăҫса йышăннă.

БРЕСЛАУ хули районĕнче пирĕн ҫарсем хулара хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассăн ҫапăҫнă, хулан кăнтăр пайĕнче темиҫе квартал йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса ҫӳренĕ.

Февралĕн 24-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 139 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвелтухăҫ Пруссире, Кенигсберг хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре, ирхине ирех тăшман пирĕн позицисене атакăланă. Пĕр ансăр участокра нимĕҫсем ҫапăҫава хăйсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене кĕртсе янă. Кунĕпех хаяр ҫапăҫусем пынă. Тăшман атакисене сире-сире ярса пирĕн ҫарсем 2.000 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ҫити пĕтерсе тăкнă.

Кенигсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем тăшман ҫарĕсен Хĕвелтухăҫ Пруссири группировкине хупăрласа илнĕ унка малалла хĕссе пынă. Нимĕҫсем, малтанах хатĕрлесе хунă позицисемпе, тимĕрпе бетонран тунă йышлă сооруженисемпе усă курса, хытă хирĕҫ тăраҫҫĕ. Пĕр соединени чаҫĕсем малалла куҫнă та нимĕҫсене Цинтен хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре ларакан темиҫе ялтан хăваласа кăларнă. Пирĕн ытти чаҫсем, тăшман вăйлă персе тăнине ҫĕмĕрсе тăкса, Тифензее чугун ҫул станцине туртса илнĕ.

Григорьев кĕҫĕн лейтенантăн хăй тĕллĕн ҫӳрекен туппин экипажĕ тăшман колоннине тапăннă. Артиллеристсем нимĕҫсен хăй тĕллĕн ҫӳрекен 2 туппине персе ҫĕмĕрнĕ, 9 пулемет, темиҫе вунă автомашина пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсен ушкăнне вĕлерсе пĕтернĕ. Дубинда старшина ертсе пынипе 7 боец ҫĕрле тăшман траншейĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă. Гранатăсем вăркăнтарса тата автоматсемпе персе, ҫав гвардеецсем нимĕҫ пехотин пĕр взводне пĕтерсе тăкнă, лайăх позицисем туртса илнĕ. Логинов кĕҫĕн сержант командир пулса ертсе пыракан тупă расчечĕ икĕ кун хушшинчи ҫапăҫусенче нимĕҫсен 7 танкĕпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă. Гвардеецсен ушкăнĕ, Яковлев капитан ертсе пынипе, тăшман дотне туртса илнĕ, нимĕҫсен контратакине сире-сире ярса, 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хойнице (Конитц) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем артиллери персе хатĕрленĕ хыҫҫăн тăшмана атакăланă. Нимĕҫсен оборонине татса, совет пехотинецĕсем малалла кайнă та Пройс Фридланд хулине каякан ҫулсем ҫине тухнă. Зуккау-Зее кӳллипе Добринка шывĕ хушшинче нимĕҫсем нумай вăхăтлăха туса лартнă укрепленисем ҫав хулана пырса кĕмелли ҫулсене хӳтĕлесе тăнă. Совет чаҫĕсем вăл укрепленисене ҫĕмĕрсе тăкнă та шыв урлă каҫса кайнă, унтан ҫав тери хăвăрт атакăласа, шоссе ҫулĕсен паха узелĕ пулса тăракан Пройс Фридланд хулине туртса илнĕ. Пирĕн пехота, танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем пулăшнипе, 10 километр малла кайнă та нимĕҫсене Бишофсвальде ялĕпе чугун ҫул станцийĕнчен хăваласа кăларнă. Пирĕн ҫарсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан тăшманăн, виллисене кăна шута илсен те, 3.000 салтакпа офицера ҫити пĕтнĕ. Нимĕҫсен 23 танкĕпе 47 туппине пĕтерсе тăкнă. 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Бреслау хулинче пирĕн ҫарсем хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассăн ҫапăҫнă. Советсен штурмлакан отрячĕсем, артиллери пулăшнипе, хулан кăнтăр пайĕнче нимĕҫсенчен темиҫе квартал тасатнă. Гинденбург площачĕ патĕнче хаяр ҫапăҫусем пуҫланса кайнă, кунта нимĕҫсен зенитнăй тупăсем йышлă пулнă. Тепĕр участокра пирĕн ҫарсем тăшманăн Ольташинран ҫурҫĕртерехри оборона тăрăхне ҫĕмĕрсе тăкнă та, ҫитĕнӳе вăйлатса пырса, нефть склачĕн районне туртса илнĕ. Ҫапăҫу хирĕнче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. 340 нимĕҫе тыткăна илнĕ. 8 танк тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Хĕвелтухăҫ Пруссире пирĕн ҫарсем нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна нумай илнĕ. Нимĕҫсен 349-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи боевой ушкăнăн тыткăна лекнĕ командирĕ обер-лейтенант Андреас Цухер ҫапла каласа кăтартнă: «Германи ку вăрçăра аяла пулса юлни ĕнтĕ пуриншĕн те паллă. Нимĕҫ салтакĕсем нумайĕшĕ халĕ, мирлĕ халăх тумтирне тăхăнса, ялсенче пытанса пурăнаҫҫĕ. Темиҫе пин дезертир фронт патĕнчи ҫулсем тăрăх сĕтĕрĕнсе ҫӳреҫҫĕ. Малалла хирĕҫ тăни ним усăсăр пулнине шута илсе, эпĕ тыткăна парăнтăм».

Нимĕҫсен 117-мĕш охраннăй батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтаксем Герберт Брендельпе Курт Штольц ҫапла каласа кăтартнă: «Пирĕн батальона вырăссем хĕссе пынине чарса лартма приказ пачĕҫ. Таракансене тыткан отрядсем 286-мĕш охраннăй дивизирен тарса пĕтнĕ салтаксене пĕр ҫĕре пухиччен пирĕн вырăссене чарса тăмалла пулнă. Ҫав тарса пĕтнĕ салтаксене пĕр ҫĕре пухма ĕлкĕрчĕҫ-и, ĕлкĕрмерĕҫ-и—вăл пире паллă мар. Пирĕн батальона вырăссем ҫĕмĕрсе тăкрĕҫ, эпир хамăр тыткăна лекрĕмĕр».

Нимĕҫсен 911-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Карл Вебер ҫапла каласа кăтартнă: «Икĕ кун хушши пынă ҫапăҫусенче пирĕн рота ҫурри ытла пĕтрĕ. Амансисене ҫапăҫу хирĕнчех пăрахса хăвармалла пулчĕ. Ҫарсем, ҫав тери хăраса ӳксе, ним йĕрки-палăсăр каялла чакни тата вырăнти халăх тарни салтаксене тăнран кăларса ячĕ. Ҫак кунсенче нимĕҫ салтакĕсем нумайĕшĕ Германи ҫĕнтерессе вуҫех шанми пулчĕҫ. Эпĕ алăри хĕҫпăшала ҫĕре пăрахрăм та тарма пикентĕм, анчах та часах мана вырăссем тыткăна ярса илчĕҫ».

1945 ҪУЛХИ АРКТИКА ЭКСПЕДИЦИЙĔСЕМ

Кăҫал Арктикăн наукăпа тĕпчев институчĕ хăйĕн ĕҫне чылай вăйлатать. Институт ҫумĕнче географи отделенийĕ тата Арктика историйĕн отделенийĕ уҫăлмалла. Тĕрлĕ экспедицисем тума палăртса хунă. Лаптевсен тинĕсĕн хĕвеланăҫ пайĕнче экспедици унти авалхи стоянкăна тĕпчесе пĕлмелле. Хĕвелтухăҫ Ҫĕпĕр тинĕсне икĕ ҫулталăха океанографи экспедицийĕ каймалла. Арктикăн вăтам пайне наукăпа тĕпчев экспедицийĕ каймалла. Вăл экспедици Папанинăн куҫса ҫӳрекен станцийĕ тата Седов экспедицийĕ пуҫланă ĕҫе—полюс ҫумĕнчи облаҫа тĕпчессине малалла туса пымалла. Вăл ĕҫе поляр авиацийĕн летчикĕсем те хутшăнмалла.

Арктикăри утравсене тата тинĕс хĕррине, ҫавăн пекех Ҫурҫĕрти пăрлă океан хĕррине биологи енчен тĕпчемелле. Уйрăмăнах Арктики утравĕсем ҫинчи ледниксене тĕпчеме шутлаҫҫĕ. Вăл ледниксене тĕпчени ҫанталăк улшăннине пĕлме кирлĕ. (ТАСС).

СССР СОВНАРКОМĔНЧЕ

Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе лайăхлатасси çинчен

Юлашки, Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.

вăрлăх участокĕсем валли элита вăрлăхĕсем (суйласа илнĕ чи лайăх вăрлăхсем) çителĕклĕ тупса парас шутпа, селекци станцийĕсем çитĕнтерекен элита вăрлăхĕсем çук районсенче элита вăрлăхĕсене чи лайăх колхозсемпе совхозсенче туса илес ĕçе организацилеме СССР Наркомземне ирĕк парас.

Республикăсен Совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсен исполкомĕсене çав ĕçе тума 65 хуçалăх суйласа илме тата вĕсене 1945 çулхи мартăн 25-мĕшĕ тĕлне СССР Наркомземне çирĕплетме тăратма хушас.

15. Çапла йĕрке тăвас: элита вăрлăхĕсем туса илес ĕçе организацилекен кашни колхозпа совхозăн агроном-семеновод (элита участокĕн заведующийĕ) тата пĕр агротехник пулмалла, вĕсене союзлă бюджетăн шучĕпе тытса тăмалла.

Элита вăрлăхĕсем туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен участоксен заведующийĕсен ĕç укçине сортсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен участоксен заведующийĕсен ĕç укçийĕпе танлаштарас.

16. Колхозсенчи элита вăрлăхĕсем туса илес ĕçе ертсе пырассине облаçсемпе крайсенчи çĕрĕç пайĕсен тата республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕсен сортовăй управленийĕсем çине хурас. Элита вăрлăхĕсем туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсене наукăпа методика енчен пулăшассине государствăн селекци станцийĕсем çине хурас.

17. Колхозсемпе совхозсем туса илнĕ элита вăрлăхĕсене пĕтĕмĕшпех Госсортфонд склачĕсене памалла тăвас.

Элита вăрлăхĕсем туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсене çакăн пек льготăсем парас:

а) колхоз обязательнăй поставкăсем тата натуроплата шучĕпе Госсортфонда панă пĕрремĕш класлă элита вăрлăхĕн кашни пăчĕшĕн пĕр пăт та 20 кĕренке ахаль тырă пани вырăнне шутламалла, обязательнăй поставкăсемпе натуроплатăран ирттерсе панă элита вăрлăхĕн кашни пăчĕшĕн вара колхоза Заготзерно склачĕсенчен кондициллĕ, апат-çимĕçе юрăхлă ахаль тĕштырă пĕр пăт та 20 кĕренке памалла;

б) колхозсемпе совхозсем—элита вăрлăхĕсем туса çитĕнтерес тĕлĕшпе ĕçлекен хуçалăхсем паракан элита вăрлăхĕсемшĕн государствăн селекци станцийĕсем валли тунă условисемпех тÿлемелле.

18. Çĕнĕрен туса çитĕнтернĕ чи пахарах та тухăçлăрах сортсене хăвăртрах сарас шутпа, государствăн селекци станцийĕсене çапла тума хушас: çав çĕнĕ сортсене государствăн сортсем тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен организацийĕсене панипе пĕрлех çав сортсене малтанлăха колхозсемпе совхозсенче, вĕсемпе калаçса татăлнă тăрăх, акса çитĕнтерессине тата çав сортсене тĕпчесе хак парассине йĕркелемелле.

Çĕнĕрен туса кăларнă паха сортсен вăрлăхĕсене колхозсенчен райсемхозсем валли тунă условисемпе йышăнма Госсортфонда ирĕк парас. Çĕнĕ сорта район тăрăх палăртса çирĕплетнĕ хыççăн, СССР Наркомземĕн çав сортăн вăрлăхĕсене селекци станцийĕсенче, райсемхозсенче тата ытти колхозсенче сарассине организацилемелле тата çав вăрлăхсене Госсортфонд валли райсемхозсенчен кăна мар, ытти колхозсенчен те хатĕрлесе йышăнмалла.

19. СССР Совнаркомĕ 1937 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 1.018 номерлĕ постановленин 14-мĕш пункчĕ çумне хушса, çапла йĕрке тăвас: тĕштырăсен, пăрçа йышши культурăсен, çу культурисемпе курăксен пысăк тухăçлă тата ытти енĕпе те паха пулса тăракан çĕнĕ сорчĕсене шыраса тупса çитĕнтернĕшĕн, çавăн пекех тата халиччен сортсене лайăхлатнăшăн селекционерсем 10.000 тенкĕрен пуçласа 100.000 тенке çити пĕр вăхăтлăх премисем илеççĕ.

Премисене 1945 çултан пуçласа, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн приказĕ тăрăх параççĕ, вĕсене çирĕплетнĕ йĕркепе 1937 çул хыççăн районсем тăрăх уйăрнă сортсемшĕн, тĕштырă культурисем енĕпе 1.000 гектартан кая мар çĕр лаптăкĕ йышăнаканскерсемшĕн, пăрçа йышши тата çу культурисем енĕпе вара 200 гектартан кая мар çĕр лаптăкĕ йышăнаканскерсемшĕн, параççĕ.

20. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне 1945 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа уйăхра пĕрре тухса тăракан «Селекция и семеноводство» ятлă научно-производственнăй журнала, 10.000 экземплярлă тиражпа тата 5 печатнăй лист пысăкĕш, çĕнĕрен кăларма тытăнма ирĕк парас.

Пĕтĕм Союзри В. И. Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх наукисен академине «Агробиология» ятлă наукăпа теори журналне, 10.000 экземплярлă тиражпа, 10 печатнăй лист пысăкĕш, икĕ уйăхра пĕрре çĕнĕрен кăларма тытăнма ирĕк парас.

21. Колхозсемпе совхозсенчи вăрлăх участокĕсене пысăк пахалăхлă сортлă вăрлăхсем татти-сыппиcĕр парса тăрас шутпа, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне çапла тума хушас: 1945 çулта государствăн сортлă вăрлăх фондне çирĕплетнĕ виçе таран хывса хăвармалла, çавăн пекех тата, тырпул сорчĕсене çĕнетмелли план тăрăх, райсемхозсемпе колхозсенчи тата совхозсенчи вăрлăх участокĕсене тивĕçтерме кирлĕ вăрлăхсен çулталăкри виçинчен 1945—1946 çулсем хушшинче элита вăрлăхĕсен тата иккĕмĕш репродукцин страховой фондне 30 процент чухлĕ хывса хăвармалла.

22. Колхозсемпе совхозсен вăрлăх участокĕсем сиччи тырпулсене тилĕ çанталăкран, шăнса пăсăласран тата йĕпенсе çĕресрен страхласа хăварас шутпа, Хатĕрлев Халăх Комиссариатне 1945 çулта тĕштырă культурисен сортлă вăрлăхĕсене Госстрахфонда çирĕплетнĕ хисеп чухлĕ хывса хăварма хушас.

Çапла йĕрке тăвас: уйрăм культурăсем тăрăх Госстрахфонда сортлă вăрлăхсем хывмалли виçене çулсерен СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕ палăртаççĕ. Госстрахфонда хывма тивĕçлĕ сортлă вăрлăхсене тĕрĕсленĕ сортлă вăрлăх участокĕсем çиччен пухса илнисене кăна хывмалла.

Государствăн страховой фондĕнчи тĕштырă культурисен сортлă вăрлăхĕсене, акнă çĕрте усă курнисĕр пуçне, ăçта та пулин урăх çĕре расходлама чарас.

23. Колхозсемпе совхозсенче, хатĕрлев пункчĕсенче сортлă вăрлăхсене мĕнле пахалăхлăн сыхласа усранине тата сортлă вăрлăхсене акма мĕнле хатĕрлесе пынине государство енчен контроллесе тăрас ĕçе вăйлатас шутпа тата СССР территорине ялхуçалăхне сиенлекен хурт-кăпшанкăсем, терлĕ чир-чĕрсем, усал çумкурăксем сарăласиччен сыхлас шутпа, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне çапла тума хушас: ÿсен-тăрансене карантин тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Службăна СССР Наркомземĕн вăрлăхсем тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен лабораторийĕсемпе пĕрлештермелле, вĕсен никĕсĕ çинче вара вăрлăхсем тĕрĕслес тата ялхуçалăх ÿсен-тăранĕсене карантин тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен государство инспекцине тума ирĕк парас.

24. Вăрлăхсене тĕрĕслес тата ялхуçалăх ÿсен-тăранĕсене карантин тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен государство инспекцийĕ çине халиччен вăрлăхсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен лабораторийĕсем тата шалтипе тулашри карантин служби туса пынă ĕçсене хурас.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, пĕр уйăхлăх срокра, вăрлăхсене тĕрĕслес тата ялхуçалăх ÿсен-тăранĕсене карантин тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен государство инспекцийĕн Положенине туса çирĕплетме хушас.

25. Вăрлăхсене тĕрĕслес тата карантин тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен государство инспекторĕсен, центрти лабораторисен, çавăн пекех республикăсенчи, крайсемпе облаçсенчи инспекторсен, лабораторисен, контроль участокĕсен, таможньăсенчи, портсенчи инспекцисен штатне государствăн союзлă бюджечĕ шучĕпе тытса тăрас. Районсенчи инспекцисемпе лабораторисен штачĕсене тивĕçлĕ республикăсемпе крайсен тата облаçсен бюджечĕсем шучĕпе тытса тăмалла тăвас.

26. Сортлă вăрлăхсем туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен хуçалăхсем валли селекционерсемпе семеноводсен квалификациллĕ кадрĕсене хăвăртрах тупса парас шутпа, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне—1945 çулта Ленинградри, Воронежри, Белоруссири ялхуçалăх институчĕсен агрономи факультечĕсем çумĕнче сортлă вăрлăхсем туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен селекци отделенийĕсен ĕçне çĕнĕрен йĕркелесе яма тата 1945 çулта Омскри, Иркутскри ялхуçалăх институчĕсенче селекципе семеноводство отделенийĕсене организацилеме хушас.

27. Селекци станцийĕсенче ĕçлекен специалистсен квалификацине ÿстерме Пĕтĕм Союзри В. И. Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх наукисен академийĕ çумĕнче семеноводствăпа селекци ĕçне вĕренмелли уйăх çурăлăх курс организацилеме СССР Наркомземне ирĕк парас, çав курс витĕр 1945 çулта 150 çынтан кая мар вĕрентсе кăлармалла тăвас.

28. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене райсемхозсемпе сортсем тĕрĕслекен участоксем валли техник-семеноводсем вĕрентсе хатĕрлеме ялхуçалăх аслă шкулĕсем тата селекци станцийĕсем çумĕнче ултă уйăхлăх курссем организацилеме хушас, çав курссем витĕр 1945 çулта 1.500 çынтан кая мар вĕрентсе кăлармалла тăвас.

Асăннă курссене вăтам шкулăн 7 класĕсенчен кая мар вĕренсе пĕтернĕ тата ялхуçалăхĕнче ĕçлесе хăнăхнă çынсене илмелле.

Ултă уйăхлăх курссенче вĕренекенсене кашни уйăхра 150-шар тенкĕ государство стипендийĕ парса тăмалла тăвас.

29. СССР Финанс Халăх Комиссариатне СССР Наркомземĕн финанс планĕнче селекципе семеноводство енĕпе ĕçлекен кадрсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе туса ирттерме укçа-тенкĕ уйăрассине пăхса хума хушас.

30. Селекци станцийĕсен тата Госсортфондăн материалсемпе техника базине юсаса йĕркелес шутпа, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне 1945 çулхи II-мĕшпе III-мĕш кварталсенче селекци станцийĕсемпе Госсортфонд валли грузовой автомашинăсем тата СТЗ-НАТИ маркăллă тракторсем йышăннă хисеп чухлĕ уйăрса пама хушас.

31. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, республикăсен Совнаркомĕсене, облисполкомсемпе крайисполкомсене 1945 çулта сортлă вăрлăхсем хурса усрама пĕтĕмĕшпе 25.000 тонна вырнаçмалăх 60 склад тума тата тĕштырă тасатмалли ВИМ-2 йышши 745 машинăна юсаса йĕркене кĕртме хушас.

Хĕрлĕ Çар кунне ют çĕршывсенче уявлани

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Совет Союзне вăрçăра пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет» пуçарса янипе, Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа вечер организациленĕ. Вечерта 2.500 çын ытла пулнă. Вĕсем хушшинче Америкăн, Англин тата Францин хĕçпăшаллă вăйĕсен представителĕсем пулнă.

* * *

БЕЛГРАД, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 21-мĕшĕнче Белград хулинче Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа чаплă вечерсем пулса иртнĕ.

* * *

ВАРШАВА, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 22-мĕшĕнче Варшава Халăх Совечĕн ларăвĕ çуртĕнче Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа чаплă пуху пулса иртнĕ. Ирĕклĕхе кăларакан çарăн уявне паллă тума Варшава хулинчи обществăпа культура деятелĕсем, рабочисем, служащисем, интеллигентсем, демократиллĕ партисен членĕсем 1.000 çын ытла пухăннă.

* * *

БЕЙРУТ, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа Ливанри Совет Союз тусĕсен обществи Бейрутра СССР çинчен калакан выставка уçнă. Выставкăна Ливанăн министрсен совечĕн председателĕ уçнă.

Турци правительстви йышăнни

АНКАРА, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Анкарари радио пĕлтернĕ тăрăх, Турци меджлисĕ паян Германипе Японие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен Турци правительстви йышăннă решение çирĕплетнĕ.

Меджлисра тухса каланă вăхăтра ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хасан Сака, правительство решенине ăнлантарса, çапла каланă: апрелĕн 25-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинче пулмалли конференцие хутшăнас тесен, Турцин кăçалхи мартăн 1-мĕшĕччен тĕнĕл держависене хирĕç вăрçа тухмалла, тенĕ.

ЕГИПЕТ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТĔНЕЛ ДЕРЖАВИСЕНЕ ХИРĔÇ ВĂРÇА ПУÇЛАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тĕнĕл держависене хирĕç оборонăллă вăрçă пуçласси çинчен йышăннă решение Египет парламенчĕ çирĕплетнĕ. Вăрçа хирĕç Вафд партийĕ тата наци партийĕ каланă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Рейнпа Маас шывĕ хушшинче союзниксен çарĕсем наступлени туса пынă. Гохпа Удена хушшинчи чугун çул çине тухнă. Гох хулине пĕтĕмĕшпех тăшмантан тасатнă. Прюмран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Хоуф хулине йышăннă хыççăн Биншейдра çапăçаççĕ. Ку районран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, Германипе Люксембург чикки çывăхĕнче, союзниксен çарĕсем Дасбург хулине кĕрсе кайнă тата Данен хулине йышăннă.

Вианден районĕнче союзниксен çарĕсем Германи чикки патне çитнĕ. Вианденран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Рот хулине йышăннă.

Саар шывĕпе Мозель шывĕ хушшинчи вискĕтеслĕхре союзниксен çарĕсем Темельс хулине тăшмантан тасатнă. Союзниксен танковăй чаçĕсем Онодорфран иртсе кайса, Саарбургран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре 3—5 мильăра ларакан пункт патне çитнĕ. Союзниксен бронетанковăй урăх чаçĕсем Саарбург хулине кĕрсе кайнă. Кăнтăртарахра союзниксен чаçĕсем Саар шывĕ хĕррине тухнă та Гамм тата Тăген хулисене йышăннă. Хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн Фрейденберг тата Оршольц хулисене йышăнса илнĕ. Саарлаутерн районĕнче тăшманăн контратакисене сирсе пăрахнă. Форбах урамĕсенче çапăçусем пыраççĕ.

Çурçĕр Эльзас тÿремĕнче союзниксен артиллерийĕ тăшман бронемашинисен ушкăнне салатса янă. Саарбрюккенпа Рейн шывĕ хушшинче юлашки ултă кун хушшинче 1.800 çынна тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çулйĕрĕсене тата транспорт объекчĕсене тапаннă. Йывăр бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе Нюрнбергри транспортпа промышленность объекчĕсене тапаннă.

Февралĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксем Вормс чугун çул центрне тапаннă. Бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ Дуисбург хулине тапаннă. Февралĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлин çине икĕ хутчен бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Италире американецсен 5-мĕш армин чаçĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем 9-мĕш кун пĕр чарăнмасăр Вена районĕнчи сортировка станцине пыра-пыра тапанаççĕ. Авиацин пысăк соединенийĕсем кăнтăрла та, çĕрле те тăшманăн пĕтĕм Çурçĕр-хĕвелтухăç Италири, Австрири тата Югославири çулйĕрĕсене тапаннă.

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Германире союзниксен çарĕсем Клеве хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Мойланд хулине кĕрсе кайнă.

Бельги, Люксембург тата Германи чикки пĕрлешнĕ тĕлтен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Бинсшейд тата Лихтенборн хулисене тăшмантан тасатнă.

Союзниксен çарĕсем Вианден хулине йышăннă, çапла вара Люксембурга пĕтĕмпех тăшмантан тасатса çитернĕ. Вианден хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем Гейхлинген хулипе Обергеклер хулине йышăннă. Союзниксен çарĕсем Саар шывĕпе Мозель шывĕ хушшинчи вискĕтеслĕхе тăшмантан тасатса çитернĕ, Феллирих тата Таверн хулисене, çавăн пекех тата Саарбург хулин хĕвеланăç енчи пайне йышăннă. Саарбург хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем икĕ тĕлте Саар шывĕ урлă каçнă та Саар шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче ларакан Зерриг хулине кĕрсе кайнă.

Февралĕн 22-мĕшĕнче союзниксен самолечĕсен пысăк соединенийĕсем йышлăн вĕçе-вĕçе пырса, тăшманăн çулйĕрĕсене, çавăн пекех тата çурçĕр Голландипе Хĕвеланăç Германири транспорт объекчĕсене тапаннă. Йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Вăтаçĕрти Германипе Кăнтăр Германири, Австрири тата Çурçĕр Италири çулйĕрĕсене тапаннă.

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, Болоньяпа Пистоя хушшинчи шоссерен хĕвеланăçнерехре тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕнтересе, хăйсен позицийĕсене лайăхлатса пынă. Тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă. Сылтăм флангра 5-мĕш армин Бразили чаçĕсем Кастелло ятлă паха çÿлĕ вырăна туртса илнĕ. 8-мĕш армин участокĕнче патрульсем активлăн кĕрешнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Берлин хулине тапаннă.

Бенеш калаçа пани

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 21-мĕшĕнче Чехословаки президенчĕ Бенеш Англи тата ытти çĕршывсен корреспонденчĕсене йышăннă. Ку йышăну Бенеш Лондонран Чехословакие кайнă май пулса иртнĕ. Бенеш Чехословакие кайнă чухне Мускава кĕрсе тухать. Йышăнура Масарик тата ытти официальнăй паллă çынсем пулнă.

Бенеш Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕне çапла каланă: эпĕ малтан Мускава каятăп, унта Совет Союзĕнче пурăнакан чех деятелĕсемпе чылайĕшĕпе тĕл пулса калаçатăп. Унтан вара эпĕ Чехословакие каятăп. Прага хулине ирĕке кăлариччен вăхăтлăха Кошице хулинче пурăнатăп. Бенеш каланă тăрăх, вăл Чехословакие çитсенех Чехословакин Лондонри правительстви вырăнтан тухать. Бенеш чехословаксен политикăллă тĕрлĕ партийĕсен лидерĕсене çавăнтах пĕрле пухать те вĕсемпе çĕнĕ правительство тăвасси çинчен калаçса татăлать. Çĕнĕ правительствăна чехословаксен тăшмана хирĕç пынă юхăмĕн членĕсем те кĕмелле.

Румынири лару-тăру

КРАЙОВО ХУЛИНЧИ ĔÇСЕМ.— РУМЫНИ «ЛЕГИОНЕРĔСЕМ» РУМЫНИ ĔÇ КОНФЕДЕРАЦИЙĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ АМАНТНĂ.— РУМЫНИ РЕАКЦИОНЕРĔСЕН ПРОВОКАЦИЛЛĔ ĔÇĔСЕМ

БУХАРЕСТ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Румына Либера» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 17-мĕшĕнче Крайово хулинче нациллĕ-демократиллĕ фронт пухнă 10.000 çынлă пуху пулса иртнĕ. Пуху йышăннă резолюцире нациллĕ-демократиллĕ фронт правительствине туса хума ыйтнă. Çавăн пекех пухура, Антонеску вăхăтĕнче лартнă префекта вырăнтан кăларса, ун вырăнне Келак инженера суйласа лартнă. Келака префект пулма суйласа лартнă хыççăнах префектурăна тата унпа юнашар урамсене çарсем хупăрласа илнĕ. Вĕсем префектурăран тухмалли пур алăксене те хурал тăратнă. Çапла вара, нациллĕ-демократиллĕ фронтăн вырăнти совечĕ тата çĕнĕрен суйланă префекта, тĕрĕссипе илсен, арестленĕ. Крайово хулипе префектура хушшинчи телефон сыхăнăвне татнă. Юлашки хыпарсем тăрăх, арестленĕ çынсене союзниксен контроль комиссийĕ хушнипе çав кунах ирĕке кăларнă.

БУХАРЕСТ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 20-мĕшĕнче «Малакс» заводĕнче Бухарестра хĕçпăшаллă «легионерсем» (фашистсем), завода ярса илме хăтланнăскерсем, Румыни ĕç конфедерацийĕн председательне Георгий Апостола пăшалпа хырăмран персе йывăр амантнă.

БУХАРЕСТ, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Бухарестра тата Румынин ытти хăш-пĕр хулисенче нациллĕ-демократиллĕ фронтăн пысăк манифестацийĕсем пулса иртнĕ. Манифестацие хутшăннисем правительство аппаратĕнчи фашистла çынсемпе çирĕппĕн кĕрешме тата Радеску правительствине улаштарма ыйтнă. Каçхине 5 сехет тĕлĕнче шалти ĕçсен министерствине хуралласа тăракан çар чаçĕсем манифестантсене пăшалсемпе пеме пуçланă. Вĕсем çине тата Бухарест префектури çуртĕнчен те, правительствăн ытти çурчĕсенчен те пенĕ. Икĕ енче те вилнисемпе аманнисем пур. Манифестаци кунĕпех пынă.

Крайова, Брашов тата Каракал хулисенче нациллĕ-демократиллĕ фронтăн пысăк манифестацийĕсем пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ. Ку хуласенче те манифестантсене Румынин çар чаçĕсем тата жандармсем пăшалсемпе пенĕ. Крайова хулинче манифестантсем префектура çуртне тытса илнĕ те çар чаçне хĕçпăшалсăрлатнă, вара халăх суйласа лартнă çĕнĕ префекта тепĕр хут ĕçе лартнă.

Союзниксен Контроль Комиссийĕн представителĕсем хушнипе манифестантсене пăшалсемпе пеме чарăннă.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Чикаго Сан» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Грецири лару-тăру пăтрансах пырать. Пластирас премьер-министра шалти ĕçсен министрĕ туса хуни тата Влахос генерала шалти ĕçсен министрĕн хăрушсăрлăх тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ туса хуни «государствăн вăрттăн ĕçлекен полицийĕн çĕнĕ системине туса хунине пĕлтерет. Тĕрмесенче рабочисем тата ЭАМ майлă çынсем тулллиех. Темиçе кун каярах Хассани лагере хупнă 3.000 çын апат çиме пăрахнă».

ЕГИПЕТ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРНЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Египетăн депутатсен палатинче Египет вăрçа хутшăнас ыйтăва сÿтсе-явнă вăхăтра Египет премьер-министрне — Ахмед-Махер пашăна вĕлернĕ. Ăна депутатсен палатинчен тухса сената кайнă вăхăтра вĕлернĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Египет премьер-министрне Ахмед-Махер пашана вĕлерекен çынна арестленĕ.

Отв. редактор заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пĕччен коммунистсен пухăвĕ

Нумаях пулмасть Октябрьски районра пĕччен коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху коммунистсен районри пухăвĕпе ВКП(б) райком пленумĕн итогĕсене тата большевизм идейипе хĕçпăшалланасси çинчен сÿтсе-явре.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Д. Тимофеев юлташ доклад туса пачĕ. Вăл партин районри пухăвĕ тата ВКП(б) райкомĕн пленумĕ йышăннă решенисемпе паллаштарчĕ, ĕçри чăрмавсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕ.

Коммунист А. Ситкова юлташ ертсе пыракан «20 лет Чувашии» колхозра çуракине лайăх хатĕрленеççĕ. Колхозăн пур культурăпа та çителĕклĕ таран вăрлăх пур. Вĕсене сортласа тивĕçлĕ кондицие лартнă, ялхуçалăх машинисене юсанă. Карабашри «Волгарь» колхозра пĕтĕм актива çуракине хатĕрленес ĕçе явăçтарнă. Вырăнти удобренисене пухас ĕçе парти членĕ П. Иванова юлташ ертсе пырать. Вăл колхоз хуçалăхĕн ытти ĕçĕсене те тĕрĕслесе тăрать, агитациллĕ-массăллă ĕçе активлăн хутшăнать. Çавăн пекех больницăри работниксем те çуракине начар мар хатĕрленеççĕ. Кунта уйрăмăнах парти членĕ Т. Охильков юлташ тăрăшса ĕçлет.

Çав вăхăтрах Вăта Пукашри «Советская деревня» колхозра çуракине хатĕрленес ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ. Унта паянхи кунччен те вăрлăх фондне сортласа пĕтермен, ялхуçалăх машинисене юсамаççĕ, лашасем начар. Апла пулин те колхоз председателĕ Е. Фандеев юлташ колхозра большевикла йĕрке тăвассишĕн тăрăшмасть. Çавăн пекех «Красная Чувашия», «Осоавиахим» тата «Восход» колхозсенчи коммунистсем те кулленхи ĕçре колхозсене, комсомолецсемпе актива сахал пулăшаççĕ, агитациллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек вырăна лартман. Клубсемпе вулав çурчĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ, колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен, Совинформбюро хыпарĕсене вăхăтран-вăхăта çеç пĕлтерсе тăраççĕ.

Пренире 4 коммунист тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте çуракине хатĕрленес ĕçре тумалли ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕç, агрокружоксем япăх ĕçленине палăртрĕç.

Пуху вăрлăх фондне мĕн пур культурăсем енĕпе хывса çитерме, ялхуçалăх машинисемпе лаша кÿлмелли хатĕрсене пĕтĕмĕшпех юсама тата вырăнти удобренисене пухас ĕçе хăвăртлатма палăртса решени йышăнчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Г. Мурзаев юлташ доклад туса пачĕ. Вăл «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренмелли меслетсемпе паллаштарчĕ.

Нумай коммунистсем харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Хăйсем мĕн вĕреннине конспектсем çырса пырса, теорипе политикăллă пĕлĕвĕсене аталантараççĕ. Уйрăмах лайăх вĕренекенсен шутне К. Вишневский, Т. Охильков, П. Портнов коммунистсене кĕртме пулать. Вĕсем халĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» юлашки сыпăкĕсене вĕренеççĕ. Сталин юлташăн кĕнекине пĕтĕмĕшпех вĕренсе пĕтернĕ. Кунпа пĕрлех асăннă юлташсем литературăпа, картăпа тата пособисемпе те туллин усă кураççĕ.

Уйрăм коммунистсем харпăрхăй тĕллĕн вĕренессине хакламаççĕ-ха. И. Алексеев, В. Архипов юлташсем ку таранччен те «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тата Сталин юлташăн кĕнекине вĕренме тытăнман. Çавна пула хальхи вăхăтри лару-тăру çинчен те тĕплĕн пĕлмеççĕ.

Пуху коммунистсен идейăпа политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума палăртса хăварчĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

«ЧАРШАВ УÇАЛСАН»

Çак кунсенче Чăвашгосиздатра колхозсенчи драмкружоксем валли «Чаршав уçалсан» ятлă эстрада сборникĕ пичетленсе тухать. Сборнике «Совет Союзĕн Гимнĕ», Н. Мранькан «Сержант Ванюшин» ятлă пьеси, «Балти мичманĕ» тата «Юлашки тĕлпулу» ятлă вырăсларан куçарнă пьесисем, декламаци валли С. Эльгерĕн, П. Хузангайăн, А. Еçхĕлĕн, Я. Ухсайăн, С. Шавлин сăввисем, Л. Агаковпа Н. Айзманăн фельетонĕсем кĕнĕ.

24.000 ÇĔНĔ ПÿРТ

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Харьков облаçĕнче хуçаланса пурăннă вăхăтра темиçе çĕр яла, темиçе вунă пин колхозник çуртне аркатса тăкнă. Государство пулăшнипе колхозниксем халь нимĕçсем кÿнĕ сиене ăнăçлăн пĕтерсе пыраççĕ. Кивçен укçа, 30.000 кубометр йывăç тата ытти материалсем илнĕ хыççăн 17 районри колхозниксем çĕнĕрен 24.000 пÿрт ытла лартнă.

Хĕрлĕ Çар кунĕ çитнĕ çĕре фронтовиксен тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен темиçе çĕр семьи пурăнма çĕнĕ çуртсене куçаççĕ. (ТАСС).

Çĕрулми калчине лартса улма туса илесси

1943 çулта йĕпе çанталăк тăнипе пирĕн çĕрулмисем шыв айне пулчĕç те чавса кăлариччен çĕрме тытăнчĕç. Колхозниксенчен чылайĕшĕ çĕрулми вăрлăхĕсĕр юлчĕç.

Çĕрулми вăрлăхĕн ыйтăвне татса парас ĕçре пире Калинин облаçĕнчи колхозсен опычĕ чылай пулăшрĕ. Эпир çав опытпа хамăр колхозра пурне те тĕплĕн паллаштартăмăр. Куçпа курса вĕренсе пыма ятарласа колхоз клубĕнче «улма лабораторийĕ» уçрăмăр. Колхозниксем çак «лабораторие» курса вĕренетчĕç. «Лаборатори» çак ĕçсене туса ирттерчĕ.

Чăн малтан, хăма ещĕксем туса хатĕрлерĕмĕр. Апрелĕн малтанхи эрнинче калча шăтарма суйласа илнĕ çĕрулмисене яровизаци тума хунă. Ăна çапла турăмăр. Ещĕксен тĕпне 2—3 сантиметр хулăмĕш нÿрĕ пăчкă кĕрпи сарнă. Ун çине чăх çăмарти пысăкĕш çĕрулмисене тăррисене çÿлелле туса, сарса тухрăмăр та çиелтен татах пăчкă кĕрпине витрĕмĕр. Çапла майпа кашни ещĕке виçĕ сий çĕрулми вырнаçтарнă. Ещĕкри пăчкă кĕрпине пĕрмаях шыв сапса вăхăтлă нÿрлĕх тытса тăнă. (ытлашши йĕпе пулни сиенлĕ). Çĕрулми хунă ещĕксене 16—17 градус ăшă тăракан пÿлĕме вырнаçтарнă. Сăнаса тăма уйрăм çын уйăрнă. Ку ещĕксенче çĕрулмие унăн куçĕсем сăмсаланса 1—1,5 сантиметр тăршшĕ ÿсиччен усранă. Ун хыççăн сăмсаланнă çĕрулмисене, тăпра тултарнă ăшăхрах ещĕксене куçарса лартса, çиелтен çÿхен тăпрапа витĕнтернĕ. Тăпраллă ещĕксенче çĕрулмин сăмсаланнă калчисем часах чĕрĕлсе каяççĕ, симĕсленсе çулçăсем те сараççĕ. Чăн малтан çĕрулми тăрринчи куççем аварланаççĕ. Çак аварланнă калчасем 5—6 сантиметр тăршшĕ çитĕнсен, çĕрулмисене хуллен тăпра ăшĕнчен кăларса, çитĕннĕ калчисене тымарĕ-мĕнĕпех хăпатса илсе тăпраллă тепĕр ещĕке лартрăмăр. Çĕрулмийĕсене каллех хăйсен шăтакне лартса çиелтен тăпра витнĕ. Çав çĕрулмисенчен 2—3 хутчен вĕсен калчисене хăпатса илсе лартма пулать. 5—6 кусла пĕр çĕрулми çиреме яхăн калча пама пултарать. Ун хыççăн çĕрулмине хăйне çĕçĕпе касса тÿрех пахчана лартмалла. Çапла вара пĕр çĕрулминчен 20—22 авăр ÿстерсе илтĕмĕр. Çак майпа лартсан, пĕр гектара 2—3 центнер çĕрулми ытлашшипех çитет.

Çĕрулмисенчен хăпатса илнĕ калчасене майăн 1-мĕшĕнче эпир тăпраллă тепĕр ещĕк çине лартса çиеĕнчех шăвартăмăр. Пĕр тăваткал метр ещĕк çине 150 тĕп калча вырнаçать.

Тулта çанталăк сивĕ тăчĕ, тăтăшах тăм ÿккелетчĕ. Çавăнпа та виççĕмĕш ещĕкре вăйлă çитĕннĕ калчасене пахчана майăн 21-мĕшĕнче çеç куçарса лартрăмăр. Пахчана куçарса лартнă вăхăтра пирĕн калчасем 15—20 сантиметр çÿллĕш пулнă. Калчана хире сулхăн е çăмăрлăрах çанталăкра куçарсан аван, ун пек тусан çĕрулми шанса каяс хăрушлăх пулмасть. Калчасене эпир пахчана тĕпне тиолĕк шывĕ янă савăт-сапасемпе илсе тухнă.

Устерсе хатĕрленĕ калчасене колхозниксене валеçсе патăмăр, юлашкине колхозăн 0,10 гектар çĕрĕ çине лартрăмăр. Шанса пăсăлнисем пулмарĕç. Часах ăнăçлăн ÿсме тытăнчĕç. Çынсен пахчинчи çĕрулмисем шăтса çунат сарнă çĕре пирĕн опытлă участокри çĕрулми çеçкене ларчĕ. «Ултă çулнă вăхăтра пирĕн улма çиме юрăхлă ÿссе çитĕнчĕ.

Колхозниксем те чылайĕшĕ пирĕн опыта пурнăçласа пычĕç. Калчаран ÿстернĕ çĕрулмисем шултăра пулчĕç, тухăçлăхĕ ахаль касса лартниччен чылай ытларах пулчĕ.

Çапла вара, çак опыт сахал вăрлăхпа пысăк лаптăка лартма май пуррине, калчаран та пысăк тухăçлă çĕрулми туса илме май пуррине кăтартрĕ. Çапла майпа ĕçлесен, июнь уйăхĕнчех çĕнĕ çĕрулми çиме пулать.

Çитес çуркунне пирĕн колхозниксем çак опыта тата анлăрах пурнăçлама ĕмĕтленеççĕ.

Пирĕн опытпа кашни колхозник, рабочисемпе служащисем усă курма пултараççĕ.

П. ИГНАТЬЕВ.

Первомайски районри Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

ПРОФСОЮЗСЕН ХĔЛЛЕХИ СПАРТАКИАДИ ВĔÇЛЕННЕ

Февралĕн 15-мĕшĕнче Кавголовра (Ленинград патĕнче) профсоюзсен командисем хушшинче мала тухассишĕн пыракан спартакиадăн юлашки ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ.

Пĕрремĕш ушкăнта «Крылья Советов» спорт обществи, иккĕмĕш ушкăнта—«Большевик» обществи, виççĕмĕш ушкăнта — Косогорти заводăн команди мала тухнă.

Çĕнтернĕ виçĕ командине те призсем панă.

ВЦСПС-ăн 1945 çулхи чемпионĕ ятне саксене панă: йĕлтĕрпе хăвăрт çÿрес тĕлĕшпе—тава тивĕçлĕ спорт мастерне Орлова (Горький хулинчи «Водник» обществи), Максимова («Центрти металлург»), Зеленовича («Рот Фронт»); конькипе ярăнас тĕлĕшпе пынă ăмăртусенче—спорт мастерне Н. Петрова («Зенит»—Ленинград) тата Акинфьевăна («Водник»—Горький); йĕлтĕрпе сăртран хăвăрт анас тĕлĕшпе—Поляковăна тата Веляковăна («Крылья Советов»—Мускав). (ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00282 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000